26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
3
КĔÇНЕРНИКУН
24(6519) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ЛЕНИНГРАД фронтĕнчи çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, февралĕн 1-мĕшĕнче КИНГИСЕПП хулине тытса илнĕ, унтан, КИНГИСЕППРАН çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра малалла наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла çапăçса тытса илнĕ, вăл шутра СТАРОЕ ГОРКОЛОВО, НОВО-ГОРКОЛОВО, КОЛГОМИЯ, РЕПИНА, ЗАЛЕСЬЕ, РУЧЬИ, ДУБКИ, ПЕРРЕМĔШ СЛОБОДКА, ИККЕМĔШ СЛОБОДКА, КОСКОЛОВО, НИЖНИЕ ЛУЖИЦЫ, ПЕСКИ, ВЕРХНИЕ ЛУЖИЦЫ, ПОЛУЧЬЕ, КУРОВИЦЫ, ОРЛЫ, КЕЙКИНО, ДАЛЬНЯЯ ПОЛЯНА, МАННОВКА, ГОРЕЛОВО, ЛОЖГОЛОВО, ЗАМОШЬЕ, СТАРОПОЛЬЕ, ХАТИЛО, ВАЛОВО, ПОРЕЧЬЕ, УСАДИЩЕ, ГЛАЗОВА, ГОРКА, ОСЬМИНО, ЛУГОВСКОЕ ятлă ялсене тата ВАЛГОВИЦЫ, КОМКОЛОВО, ЛЕТНЯЯ, ТУГАНЫ ятлă чугун çул станцийĕсене.

ЛЮБАНЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманăн вăрман çулĕсем çĕнтере-çĕнтере пырса, тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, НОВИНКА ПОСЕЛОКНЕ, ГЛУБОЧКА, АПРАКСИН БОР, ЧЕРВИНСКАЯ ЛУКА, ЧЕРВИНО, КРАПИВНО, КРУТИК, КРИВИНО, ОЛЬХОВСКИЕ ятлă ялсене тата НОВИНКА ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

НОВГОРОД хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 30 ял ытла тытса илнĕ, вăл шутра БЕЛЫЕ, ХОЛОМЦЫ, ПОЧАП, ХЛУПИНО, КОСТРО, ВЕЛЬЯЩЕВА ГОРА, ЖИЛИ, КУРИНО, ГОРОШИНО (Батецкаяран 4 километр çурçĕртерехре), КНЯЖЬЯ ГОРА, РЕЧКА, БОР, МАЛЫЕ ТОРОЩКОВИЧИ, ЛИХАРЕВА ГОРКА, НОВОЕ СЕЛО, ЛУНЕЦ, ЮГОСТИЦЫ, БОЛЬШОЕ КОНЕВЕЗЬЕ, ТЕТЕРЕВИНО, ПЕРЕЦКИЕ, ВЫСОКОВ ятлă ялсем.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

Январĕн 31-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче тăшманăн 74 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

Ленинград фронтĕнчи çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем Кингисепп хулинчен кăнтăртарахра тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Луга шывĕ урлă каçса кайнă. Совет çарĕсем, тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр туса, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та паян Кингисепп хулине тытса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, халĕ вĕсене шута илеççĕ. Пирĕн тепĕр соединенин чăсĕсем, Финн заливĕн çыранĕсем тăрăх хăвăртăн малалла куçса пырса, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ, Луга вăрринe çитсе тухнă. Кингисепп хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем Самро кўлли патне çитсе тухнă. Кун каçиччен тăшманăн 2.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Корычев старши лейтенант ертсе пыракан автоматчиксем штаб автобусне пĕтерсе тăкнă, автобусра нимĕç офицерĕсем тата пĕр полковник пулнă. Замяткин лейтенантăн подразделенийĕнчи боецсем пĕр чугун çул станцине вăркăнса кĕрсе кайнă та, нимĕçсен гарнизонне пĕтерсе тăкса, апат-çимĕç, снарядсем тата çар пурлăхĕ хунă 12 склада тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Любань хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă. Вăрманлă-шурлăхлă вырăнти питех те йывăр условисенче кĕрешсе, совет боецĕсем, тăшмана çавăрса илмелли маневрсем туса, нимĕçсен каялла чакмалли çулĕсене пўлĕ-пўлĕ лартаççĕ те вĕсен салтакĕсемпе техникине пĕтерсе пыраççĕ. Пирĕн пĕр часть Апраксин Бор ятлă ялта нимĕçсен 121-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи артиллери полкне çавăрса илнĕ те аркатса тăкнă. Пирĕн боецсем 30 тупă, 70 автомашина ытла тата 150 лаша тытса илнĕ. Нимĕç артиллерисчĕсене чылайĕшне тыткăна илнĕ.

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 30 ял ытла тытса илнĕ. Батецкаяпа Дно хушшинчи чугун çултан хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан совет чăçĕсем çак участока нимĕçсен резервран хальçеç пырса çитнĕ чăçĕсен темиçе контратакине сирсе янă. Тăшмана хăйне хирĕçле пырса çапса, пирĕн боецсем нимĕçсене çĕнĕрен каялла чакарнă. Çав çапăçусенче 800 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. 16 тупă, 78 пулемет тата 3 боеприпас складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Новосокольники хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем чылай ялсене тытса илнĕ. Çав ялсемшĕн пынă çапăçусенче тăшман пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 23 тупă, 32 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Еçсынни депутачĕн Новгород хули совечĕн исполкомĕн председателĕ Юдин юлташ нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Новгород хулинче тунă ирсĕр ĕçсем çинчен каласа панă: «Вырăс халăхне çав тери курайман нимĕçсем вырăссен авалхи Новгород хулине ним хăвармиччен çаратса тухнă, ишсе пĕтернĕ. Хулари 2.300 çуртран мĕн пурĕ те 40 çурт кăна тăрса юлнă. Нимĕç варварĕсем вырăс халăхĕн историллĕ памятникĕсене кĕл купи туса хăварнă. Рюриково Городищĕне, XIV-мĕш ĕмĕрте тунă çуртсемпе пĕрле, çавăн пекех тата Спас Нередица чиркĕвне, XII-мĕш ĕмĕрте тунăскерне пĕтерсе тăкнă. Зверин монастырьне, Юрьев монастырьне, Фролпа Лавр чиркĕвне, XIV-мĕш ĕмĕрте тунăскерсене, пĕтĕмĕшпех ишсе антарнă. Гитлер бандичĕсем Марфа Посадница дворецне çунтарса янă. Духов монастырĕн çуртне çунтарса янă, чиркĕвне ишсе антарнă. Çавăн пекех тата Федор Стратилат, Андрей Стратилат чиркĕвĕсене, Знаменски Собора, Россия пин çул тултарнă ятпа лартнă памятнике, историллĕ музее тата авалхи ытти памятниксене те ишсе антарнă. Нимĕçсем вырăссен зодчествин пахаран та паха памятникĕнчен—XI-мĕш ĕмĕрте тунă Софийски собортан—çав тери мăшкăлласа кулса пĕтернĕ. Çын сăн-сăпатне çухатнă фашистла дикарьсем Софийски собортан склад тунă. Соборăн тĕп куполне, хĕрлĕ ылттăнпа витнĕскерне, ишсе антарнă, ылттăн çиййе вăрласа кайнă. Хаклă тăракан авалхи памятниксене тата илемлетнĕ япаласене нимĕçсен фашистла захватчикĕсем нумайĕшне Германие турттарса кайнă».

Донбасри ачасене пулăшмалли фонда 1 миллион та 125 пин тенкĕ пухăннă

Шупашкар районĕнчи «XI лет Октября» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем Донбасс ачисене пулăшмалли фонда пама укçа-тенкĕ пухас ĕçе пуçарнине республикăри предприятисемпе колхозсенчи тата учрежденисемпе шкулсенчи çамрăксем хавассăн йышăнса илчĕç. Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне Донбасри ачасене пулăшмалли фонда республикăра пĕтĕмпе 1 миллион та 125 пин тенкĕ пухăннă.

Донбасс ачисене пулăшма укçа-тенкĕ пухасси Улатăр хулинче (ВЛКСМ горкомĕн секретарĕ Спичков юлташ), Çĕрпў районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Митрофанов юлташ), Шупашкар районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Смирнова юлташ) тата Комсомольски районра (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Голландцева юлташ) ăнăçлăн пырать.

Ку ĕçе Хĕрлĕ Чутай районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Порейкин), Элĕк районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Родикова) тата Çĕмĕрле районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Кощеева) япăх организациленĕ.

Донбасри ачасене пулăшмалли фонд тунă çĕре пурте активлăн хутшăнар!

Ăмартăва 200 йĕлтĕрçĕ хутшăнчĕ

КАНАШ. Çак кунсенче кунта хулари шкулсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Унта 200 йĕлтĕрçĕ хутшăнчĕ. Ăмăртура 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулти арçын ачасен, пĕррем mĕш номерлĕ вăтам шкулти хĕрачасен командисем тата «Смена» физкультура обществи мала тухрĕ.

АКЧУРИН.

ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕ

Национальноçсен Совечĕн тата Союз Совечĕн 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчи ларăвĕсем çинчен

Информациллĕ пĕлтерў

Ĕнер, февралĕн 1-мĕшĕнче, 11 сехетре, СССР Верховный Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра, Кремльре, Национальноçсен Совечĕн тăваттămĕш ларăвĕ пулса иртнĕ, кăнтăрла 2 сехетре—Союз Совечĕн тăваттămĕш ларăвĕ пулнă.

Национальноçсен Совечĕн ларăвне Национальноçсен Совечĕн Председателĕ депутат Н. М. Шверник, Союз Совечĕн ларăвне—Союз Совечĕн Председателĕ депутат А. А. Андреев председатель пулса ертсе пынă.

Палатăсен ларăвĕсенче кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйту тăрăх докладчикăн—ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссарĕн А. Г. Зверев юлташăн тата Национальноçсен Совечĕпе Союз Совечĕн бюджет комиссийĕсен содокладчикĕсен—И. С. Хохловпа К. И. Николаева депутатсен юлашки сăмахĕсене итленĕ.

Национальноçсен Совечĕ тата Союз Совечĕ ССР Союзĕн 1944 çулхи государство бюджетне пĕрсаслăн çирĕплетнĕ. Малтан статьясем тăрăх вуласа, унтан пĕтĕмĕшпе вуласа, «Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн 1944 çулхи государство бюджечĕ çинчен калакан закона» пĕрсаслăн çирĕплетнĕ.

Союз Совечĕн тата Национальноçсен Совечĕн 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчи пĕрлехи ларăвĕ çинчен

Информациллĕ пĕлтерў

Ĕнер, февралĕн 1-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, СССР Верховный Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра, Кремльре, Союз Совечĕн тата Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ пулса иртнĕ. Ложăсене ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем тата ССР Союзĕн Правительствин членĕсем пырса ларнине залра ларакансем нумайччен тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Председатель сĕтелĕ умĕнче: Союз Совечĕн Председателĕ А. А. Андреев, Национальноçсен Совечĕн Председателĕ Н. М. Шверник тата вĕсен заместителĕсем Т. Д. Лысенко, У. Юсупов, Ч. А. Асланова, М. В. Кулагин. Ларăва Союз Совечĕн Председателĕ депутат А. А. Андреев ертсе пырать.

Кун йĕркинче — Оборона Халăх Комиссариатне тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă Комиссариатсенчен союзлă республикăсен Халăх Комиссариачĕсем тăвас ыйту.

Çак ыйту тăрăх ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ В. М. Молотов юлташ, тухса каланă. Ăна залра ларакансем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

В. М. Молотов юлташ доклад тунă чухне залра ларакансем темиçе хутчен тăвăллăн алă çупнă, вĕсем ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сессире пăхса тухма тăратнă законопроектсене тата государство ĕçĕнче пысăк улшăнусем тума панă сĕнўсем хамăрăн аслă государствăна малалла çирĕплетме пулăшма май панине тăвăллăн алă çупса ырланă.

В. М. Молотов юлташ доклад туса пĕтернĕ хыççăн пренисем пуçланнă. Пренисенче çак депутатсем тухса каланă: Ю. И. Палецкис (Литва ССР-ĕ), М. Д. Багиров (Азербайджан ССР-ĕ), В. Т. Лацис (Латви ССР-ĕ), П. К. Пономаренко (Белорусс ССР-ĕ), Богомолец (Украина ССР-ĕ), Варес (Эстони ССР-ĕ), М. С. Гречуха (Украина ССР-ĕ), П. С. Прокконен (Карело-Финн ССР-ĕ).

Хирĕç калакансем пулман пирки, Молотов юлташ юлашки сăмах каламан.

СССР Верховный Совечĕ, палатăсем тăрăх уйрăммăн сасăласа, «Союзлă республикăсенче уйрăм çар формированийĕсем тăвасси çинчен тата çавна май Оборона Халăх Комиссариатне союзлă Комиссариатран союзлă республикăсен Халăх Комиссариачĕ тăвасси çинчен калакан закона» тата «Союзлă республикăсене тулашри çыхăнусем тĕлĕшпе полномочисем парасси çинчен тата çавна май Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатран союзлă республикăсен Халăх Комиссариачĕ тăвасси çинчен калакан закона» пĕрсаслăн çирĕплетнĕ.

Çак законсене йышăннă хыççăн кун йĕркин 3-мĕш пункчĕ тăрăх СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ çинчен сĕнў пама СССР Верховный Совет Президиумĕн председательне М. И. Калинин юлташа сăмах панă.

Калинин юлташ СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Пĕрремĕш заместителĕ пулма Н. М. Шверник юлташа суйлама сĕннĕ.

Верховный Совет, икĕ палата тăрăх пĕрле сасăласа, пĕрсаслă пулса, СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма Николай Михайлович Шверник юлташа суйлать.

Çакăнпа СССР Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕ хупăнать.

Оборона Халăх Комиссариатне тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатсенчен союзлă республикăсен Халăх Комиссариачĕсем тăвасси çинчен

В. М. МОЛОТОВ юлташ СССР Верховный Совечĕнче 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче тунă доклад

Депутат юлташсем!

Верховный Совет умне икĕ Наркомата, Оборона Халăх Комиссариачĕпе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатсенчен союзлă республикăсен Халăх Комиссариачĕсем тăвасси çинчен ыйту лартнă. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак ыйтăва питех те вăхăтлă тесе шутлать.

Ĕç кунта икĕ Халăх Комиссариатне яланхи пек урăхлатса йĕркелесси çинчен мар пырать. Ĕç, чи малтан, союзлă республикăсем умне ответлă çĕнĕ задачăсем лартасси çинчен пырать. Пĕрремĕшĕнчен, хамăрăн çĕршыва сыхлас тĕлĕшпе, тата, иккĕмĕшĕнчен, ют çĕршыв государствисемпе тулашри çыхăнусем тытас тĕлĕшпе союзлă республикăсен çĕнĕ задачисемпе прависем пирки ыйту лартнă, çавна май вара пирĕн союзлă государствăра кирлĕ улшăнусем туса ирттересси çинчен ыйту лартнă.

Халиччен союзлă республикăсем Хĕрлĕ Çара туса йĕркелес тата хĕçпăшаллантарас пĕрлехи ĕçе хутшăнса пынă. Пирĕн Хĕрлĕ Çара Пĕтĕм Союзри çар пулмалла туса йĕркеленĕ, республикăсен уйрăм çар формированийĕсем пулман. Халĕ ĕнтĕ республикăсен çар формированийĕсене тăвас пирки сĕнў тăратнă. Çав çар формированийĕсем Хĕрлĕ Çарăн тĕп чăçĕсем пулса тăмалла. Çавна май ĕнтĕ союзлă республикăсенче Оборона Халăх Комиссариачĕсем тума кирли, çавăн пекех тата пĕтĕм союзлă Оборона Халăх Комиссариатне союзлă республикăсен Халăх Комиссариачĕ туса хума кирли те пухса тăрать.

1922 çулта Советлă Республикăсен Союзне тунă хыççăн тулашри политикăллă çыхăнусем пĕтĕмĕшпех пĕтĕм союзлă Халăх Комиссариачĕн—Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн аллинче пĕтĕçсе тăнă, уйрăм республикăсем вара тулашри çыхăнусем тĕлĕшпе хăйсен полномочийĕсене çав Наркомат аллине панă. Халĕ Союз Правительстви союзлă республикăсене ют çĕршыв государствисемпе тўррĕмĕнех çыхăну тытма тата вĕсемпе килĕшўсем тума полномочисем памашкăн сĕнет. Паллах ĕнтĕ, республикăсене тулашри çыхăнусем тĕлĕшпе полномочисем панине пула союзлă республикăсенче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕсем тума кирлĕ тата пĕтĕм союзлă Наркоминдела союзлă республикăсен Наркомачĕ туса хума кирли тухса тăрать.

Мĕн пирки çавăн пек туса йĕркелеме сĕнни питех те паллă. Çавăн пек урăхлатса йĕркелени союзлă республикăсен ĕçне пысăккăн аслăлатнине пĕлтерет. Çав ĕçе тума союзлă республикăсем политикăпа экономика тата культура тĕлĕшĕнчен ўснине пула, урăхла каласан, вĕсем наци тĕлĕшĕнчен аталанса çитĕннине пула май пулса тăчĕ. Çак ĕçре ĕнтĕ нумай нациллĕ совет государствинче наци ыйтăвне практикăра татса парас тĕлĕшпе малалла çĕнĕ паха утăм тунине курмасăр, пирĕн ленинла-сталинла наци политикин çĕнĕ çĕнтерў тунине курмасăр тăма май çук. (Алă çупаççĕ). Анчах, çавăн пек урăхлатса йĕркелес ĕçе тума пирĕн республикăсем çирĕпленнине пула кăна мар май килчĕ, çавна тума пирĕн пĕтĕм союзлă государство пĕтĕмĕшпе ўссе çирĕпленнине пула май килчĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар, чи хăрушă тăшманăн тĕп вăйĕсемпе кĕрешес ĕçĕн мĕнпур йывăрлăхĕсене хăй çине тўссе ирттерекенскер, нимĕçсен фашистла çарне çапа-çапа аркатни, тăшмана совет территорийĕ çинчен пĕтĕмĕшпех хăвалаçа кăларас тата ăна пуçĕпех çапса аркатас самантра ăнăçлăн çывхартса пыни Совет Союзĕ малалла ўссе çирĕпленнине пуринчен те ĕнентермеллĕрех кăтартса парать. (Алă çупаççĕ). Тăшман Хĕрлĕ Çар поражени тўсессине шанса тăни мĕн тери намăсла путланса ларни, Гитлер Совет Союзĕнчи халăхсене пĕр-пĕринчен уйăрма ĕмĕтленни мĕн тери айванла ĕç пулни халĕ ĕнтĕ яр уççăнах курăнса тăрать. Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсенчен миллионшар çын хутшăннă пирĕн çар, тăшман тылĕнче пирĕн партизансем çав тери пысăк пулăшу парса тăракан пирĕн çар хамăр çĕршыв мĕн тери çирĕпленнине, совет стройĕ мĕн тери хăватлине, совет халăхĕсен туслăхĕ мĕн тери аслине кунран-кун ăнăçлăрах кăтартса пырать. (Алă çупаççĕ).

Оборона ĕçĕсемпе тулашри çыхăнусене организацилес тĕлĕшпе улшăнусем туса ирттерме çак сĕнĕве пани, союзлă республикăсен функцийĕсене ўстерес та ытларах сарнипе Совет Союзĕн вăйĕсем çирĕпнине, вĕсем малалла ўснине эпир шанса тăнине çĕнĕрен çирĕплетсе пама тивĕçлĕ. Çав шанчăк вăл çакăн пирки те тата вăйлăнрах курăнса тăрать: çав улшăнусене эпир Отечественнăй вăрçă хĕрсе пынă тапхăрта, пирĕн халăхсен вăйĕсене пĕтĕмĕшпех кĕрешĕве хунă тапхăрта туса ирттерме сĕнетпĕр. Кун пек тапхăрта кашни государствах çавăн пек пысăк улшăнусем туса ирттерме хăюллăх тупайман пулĕччĕ.

I.

Оборона Халăх Комиссариатне урăхлатса йĕркелесси

Оборона Халăх Комиссариатне урăхлатса йĕркелес ыйту çине куçатăп.

Закон проекчĕ тăрăх çапла тума сĕннĕ: союзлă республикăсем республикăсен çар формированийĕсене туса йĕркелеççĕ, Оборона Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатран союзлă республикăсен наркомачĕ тумалла пулать, Çавна май пĕтĕм союзлă Конституцие кирлĕ пек хушса çырнисем кĕртме сĕнеççĕ.

Пирĕн хальхи вăхăтра та Хĕрлĕ Çарта нациллĕ çар формированийĕсем пур. Пирĕн çарта литовецсен, латышсен, эстонецсен, грузинсен, азербайджансен, армянсен, казахсен тата ытти хăшпĕрисен çар формированийĕсем пур. Çав çар чăçĕсенчен хăшпĕрисене Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче туса йĕркеленĕ. Халĕ ĕнтĕ, Совет Союзĕнчи пур халăхсем те Хĕрлĕ Çар ретĕнче хăйсен вырăнĕсене йышăнма ĕмĕтленнĕ чухне, пирĕншĕн республикăсен çар формированийĕсене туса йĕркелесси шаха вырăн йышăнса тăрать.

Çакă паллă: патша Российĕнче хăшпĕр национальноçсемпе халăхсенчен çар службине илмен. Сăмахран, узбексене, казахсене, таджиксене, туркменсене, киргизсене, Çурçĕр Кавказри чылай халăхсене, çавăн пекех тата Çурçĕрти халăхсене

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн Х-мĕш Сессийĕ

Оборона Халăх Комиссариатне тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатсенчен союзлă республикăсен Халăх Комиссариачĕсем тăвасси çинчен

В. М. МОЛОТОВ юлташ СССР Верховный Советĕнче 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче тунă доклад

Юлашки

çара илмен. Патша влаçĕ хăй колони е çурма колони йĕркипе тытса усранă халăхсене, паллах, шанма пултарайман. Патша влаçĕ çав халăхсене майĕпе çара явăçтарма хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче лару-тăру тĕпренех улшăнчĕ.

Пирĕн законсенче, паллах, пĕр-пĕр национальноçа çара илес тĕлĕшпе правăсем енчен нимĕнле чăрмавсем те çук. Анчах Совет Союзĕн пур пайĕсенче те Хĕрлĕ Çара илессине тĕрĕссипех пурнăçа кĕртме май туса хурас тесен, хăшпĕр вăхăт кирлĕ пулнă. Иртнĕ çулсенче ССР Союзĕн ĕлĕкхи вăхăтра çара илмен районĕсенче те çынсен хăшпĕр пайне Хĕрлĕ Çара илсе пынă. Хĕрлĕ Çарта нациллĕ çар чаçĕсем те туса пынă, анчах çав формированисем хальхи вăхăта çитиччене тивĕçлипе аталанма пултарайман.

Халĕ лару-тăру лайăх еннелле улшăнчĕ. Союзлă республикăсенче çар формированийĕсем тума çителĕклĕ таранах май пулса тăчĕ. Пур республикăсенче те рядовой боецсен кадрĕсем кăна мар, çавăн пекех тата тивĕçлĕ çар чаçĕсене ертсе пыма пултаракан командирăй составăн паллă кадрĕсем те пур. Çапла ĕнтĕ, союзлă республикăсенче çар формированийĕсем тăвас ĕçе халĕ çирĕп никĕс çине лартма пулать. Анчах çав задачăна пурнăçа кĕртме республикăсенче Оборона Халăх Комиссариачĕсем пулни кирлĕ, апла пулсан вара, пĕтĕм союзлă Оборона Халăх Комиссариатне союзлă республикăсен Наркомачĕ туса хума кирли тухса тăрать. Çакна асра тытмалла: çавăн пек тунипе республикăсем шкулсемпе аслă вĕренÿ заведенийĕсенче çар ĕçне вĕрентесси çине ытларах çаврăнса пăхма тытăнĕç, пире çавă кирлĕ те ĕнтĕ. Çакăн пек лару-тăрура республикăсенче Хĕрлĕ Çарăн тĕп чаçĕсем пулса тăракан çар формированийĕсене туни питех те паха вырăн йышăнĕ.

Çакă вăл пирĕн Хĕрлĕ Çарăн ĕçĕнче мĕнле паларĕ-ха? Çакă вăл Хĕрлĕ Çара çирĕплетме, унăн хăватне ÿстерме пулăшĕ-и? Çапла, пулăшĕ, кун пирки нимĕнле иккĕленÿ те пулма пултараймасть. Пирĕн çар Совет Союзĕнчи халăхсемшĕн яланах çывăх та хаклă пулнă. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче ССР Союзĕнчи халăхсем хăйсен çарне татах та ытларах юратма пуçларĕç, совет çыннисем Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсемпе, унăн геройлăхĕпе татах та ытларах мухтанса савăнассĕ. (Алă çупаççĕ). Чăн та, пирĕн çар Украинăна ирĕке кăларассишĕн, Белоруссие ирĕке кăларассишĕн мĕнле чаплăн кĕрешнине кам курмасть-ха ĕнтĕ? Çывăх вăхăтсенчех Литвана, Латвие, Эстоние, Молдавие, Карело-Финн республикине ирĕке кăларма хатĕрленес тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çар тăвакан ĕçсене кам пĕтĕм чун-чĕререн хакламасăр тăрĕ-ха? (Нумайччен алă çупаççĕ). Совет войскисем Азербайджана, Грузие, Армение Германи фашизмĕ тапăннинчен çăлса хăварнине кам асра тытмасть-ха ĕнтĕ? (Алă çупаççĕ). Хамăрăн столицăна—Мускава хÿтĕлесе хăварнăшăн, нимĕçсене Сталинград патĕнче çапса аркатса, пĕтĕм фронтра наступлени тума тытăннăшăн, Ленинграда хÿтĕлесе хăварнăшăн, Ленинграда тăшман блокадинчен пĕтĕмĕшпех хăтарнăшăн тата халĕ тăшманăн йытăкĕтĕвĕсене, сывлăш çаварма памасăр, тăван çĕр çинчен хăваласа кăларса пынăшăн хамăрăн Хĕрлĕ Çара совет халăхĕ хушшинче кам тав туса мухтавламĕ-ха? (Тăвăллăн нумайччен алă çупаççĕ). Хĕрлĕ Çар хамăрăн Тăван çĕршыв тĕлĕшпе кăна мар, çавăн пекех тата хăйсен чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн, фашизм кÿрекен вилĕмле хăрушлăха хирĕç кĕрешекен мĕнпур демократиллĕ çĕршывсем тĕлĕшпе те ирĕке кăларас ĕçе туса пынине халĕ ĕнтĕ, фашизм чирĕпе чирленĕ çынсемсĕр пуçне, кам ăнланса илмерĕ-ха? (Алă çупаççĕ). Пирĕн заводсемпе фабрикăсенчи рабочисемпе работницăсем, колхозсенчи хресченсем, пирĕн интеллигенци, пĕтĕм совет çыннисем Хĕрлĕ Çарăн хăватне тĕреклетме хăйсен пĕтĕм вăйĕсене пама хатĕр тăнине, вĕсем хăйсем вăя хĕрхенмесĕр ĕçленипе Тăван çĕршыв умĕнчи, паттăр Хĕрлĕ Çар умĕнчи хăйсен тивĕçне пурнăçа кĕртсе пынине кам пĕлмест-ха ĕнтĕ? (Нумайччен алă çупаççĕ).

Республикăсен çар чаçĕсене туни пирĕн Хĕрлĕ Çара, Тăван çĕршыва хÿтĕлесе тăраканскере тата Совет Союзĕн шанчăклă тĕрекĕ пулса тăраканскере, малалла тĕреклетсе пыма тивĕçлĕ. Совет Союзĕн тăшманĕсем иккĕленмесĕр тăма пултараççĕ, мĕншĕн тесен, Хĕрлĕ Çара çакнашкал çĕнĕлле йĕркеленипе пирĕн государствăн вăйĕсем татах ытларах тĕрекленĕç. Çакă вара вĕсене малашне сыхланарах пурăнма хушĕ. Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ çапла çĕнĕрен тĕреклени пирĕн çĕршыва Хĕвелтухăçĕнчи тата Хĕвеланăçĕнчи халăхсем умĕнче хăйĕн авторитетне малалла татах ÿстерсе пыма пулăшĕ. (Алă çупаççĕ).

II. Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне урăхлатса йĕркелесси

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă Наркоматран союзлă республикăсен Наркомачĕ туса хуни те пĕчĕк вырăн мар йышăнать.

Совет Союзне туса йĕркеличчен РСФСР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕпе пĕрле Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕсем Украинăра, Белоруссире, Грузире, Армение, Азербайджанра пулнă, вĕсем тивĕçлĕ чухне ытти государствăсемпе тулашри ĕçсене хутшăннă. Малтанхи тапхăрта, пирĕн государство пĕтĕм Союзри государствăна пĕрлешиччен чухне, уйрăм пайсенчен тăнă чухне, уйрăм советлă республикăсемпе ют çĕршывсем хушшинче договорсемпе килĕшÿсем чылай тунă пулнă. Хăшпĕр чухне РСФСР представителĕсем ытти союзлă республикăсенчен пĕтĕм тĕнчери канашлусенче пулма тата ытти государствăсемпе пурин ячĕпе е темиçе советлă республика ячĕпе договорсем тума ятарласа полномочисем илнĕ. Сталин юлташ Советсен Пĕтĕм Союзри 1-мĕш съездĕнче çапла каланă: «Ун чухне совет республикисем пĕрле ĕçленĕ пулин те, чи малтан кашни харпăр-хăйĕн пурнăç ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ пирки, уйрăмшар çул па пынă». Малтанхи тапхăрта ирĕксĕрех çавăн пек тумалла пулнă.

ССР Союзне тунă чухне, союзлă республикăсен пĕрлехи ирĕкĕпе килĕштерсе, ют çĕршыв государствисемпе тытакан тулашри çыхăнусен ĕçне пĕр центрта пĕрлештерме йышăннă. Ун чухне вара Ют çĕршыв Ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Наркоматне тунă. Çав Наркомат уйрăм совет республикисен Наркоминделĕсен прависене те илнĕ. Çавăнтан пуçласа паянхи куна çитиччен Совет государстви чикĕ тулашĕнчи ĕçсене пĕтĕм Союзри дипломатиллĕ представительсем урлă туса пынă. Çавăн пекех ют çĕршыв государствисемпе тăвакан договорсемпе килĕшÿсене те Союз ячĕпе тунă. Çакă вăл пирĕн государство аталанăвĕн тивĕçлĕ тапхăрĕ валли кирлĕ пулнă, çакă вăл хăйĕн лайăх результачĕсене пачĕ, государствăна çирĕплетрĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсенче унăн вырăнне çÿле çĕклерĕ. (Алă çупаççĕ).

Ун чухне те, партин 1923 çулта пулса иртнĕ съездĕнчех, Сталин юлташ çапла каланă:

«Наци ыйтăвне эпир пĕр хутчен мар лартăпăр-ха, мĕншĕн тесен наци условийĕсемпе пĕтĕм тĕнчери условисем улшăнса пыраççĕ, вĕсем улшăнма пултараççĕ те. Эпĕ çапла пулмĕ тесе калама пултараймастăп: тен, пирĕн хăшпĕр комиссариатсене, халĕ Республикăсен Союзĕн составне пĕрлештерекенскерсене, кайран уйăрмалла та пулĕ...».

Пирĕн партире кăна мар тата пирĕн çĕршывра та кăна мар наци ыйтăвне чи лайăх пĕлекен çын пулса тăрса, Сталин юлташ, аслă Ленинпа пĕрле Совет Союзĕн никĕсне хывнăскер, ун чухнех çакна кăтартса панă: пĕтĕм тĕнчери обстановкăра пулса иртекен улшăнусем тата нациллĕ аталану Совет государствин аппаратне организацилĕх тĕлĕшпе пĕр хутчен мар урăхлатса çĕнетме хушĕç-ха. Ĕçри лару-тăру çине, уйрăмах Совет Союзĕ пек çамрăк та хăвăрт çирĕпленсе пыракан организмра, урăхла пăхма та çук.

Халĕ ĕнтĕ союзлă республикăсен тулашри çыхăнăвĕсем пирки ыйту Совет Союзне тунă чухнехинчен, çирĕм çул каярах пулнă вăхăтринчен урăхла тăрать. Çав ыйту вăл республикăсен пурнăçĕ ыйтнинчен тухса тăчĕ, ăна татса пама пĕтĕмĕшлĕ Союзăн интересĕсем хушаççĕ.

Хăшпĕр ют çĕршыв государствисем Октябрьти социализмлă революцире çуралнă совет республики пурăннине асăрхама тăрăшман вăхăт тахçанах иртсе кайнă ĕнтĕ. Халĕ ĕнтĕ пачах урăхла, ют çĕршыв государствисем хушшинче пирĕн государствăпа дипломатиллĕ çыхăну тытас тата çав çыхăнăва аталантарса пырас туртăм ÿссе пырать. Паллах, пĕтĕм тĕнчери вăрçă пынă вăхăтра ку тĕлĕшпе хăйне кура сахал мар йывăрлăхсем пур, анчах çапах та вăрçă çулĕсенче те ССР Союзĕн пĕтĕм тĕнчери çыхăнăвĕсем пĕр пăрканмасăр сарăлса пычĕç. Çакна та калама пулать, Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери çыхăнăвĕсем уйрăмах вăрçă çулĕсенче çĕнĕ, татах та çÿлерех пусăма çĕкленчĕç. Фактсем пуриншĕн те паллă. Совет влаçĕ пуçланнăранпа эпир малтанхи хут Великобританипе туслă çыхăнусем кăна мар, çавăн пекех тата союзлă çыхăнусем те туса хутăмăр. (Нумайччен алă çупаççĕ). Çавăн пекех Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе те пирĕн лайăх çыхăнусем пулса тăчĕç. (Нумайччен алă çупаççĕ). Гитлера хирĕçле коалици, Совет Союзĕ, Великобритания тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем пуç пулса тăракан хăватлă коалици пулса тăчĕ. Çав коалици мĕнпур демократиллĕ государствăсемшĕн вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине хакласа çитерме те йывăр. (Алă çупаççĕ). Совет Союзĕпе Европăри государствăсем хушшинчи туслă çыхăнусем çирĕпленсе пынине Совет Союзĕпе Чехословаки хушшинче нумаях пулмасть договор туни те кăтартса парать. Демократиллĕ аслă тата кĕçĕн çĕршывсем вăрçă вăхăтĕнче пĕрлехи тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте кăна мар, вăрçă хыççăнхи тапхăрта та мире агрессиллĕ çĕршывсем çĕнĕрен тапăнассинчен сыхласа хăварас ятпа пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме никĕс хывнă. Пурийшĕн те паллă, Мускаври тата Тегеранри конференцисем Гитлера хирĕçле коалицине аталантарса çирĕплетес ĕçре пысăк вырăн йышăнчĕç. Гитлера хирĕçле лагерьти халăхсем тăшмана çывăх вăхăтрах тата пĕтĕмĕшпех çĕнтерессине шанса тăни, союзниксем пĕрлехи тăшмана аркатмаллах пырса çапас вăхăт инçе маррине шанса тăни, çавăн пекех тата çак пĕрлехи кĕрешÿре фашизма хирĕçле çĕршывсен союзĕпе туслăхĕ татах та ытларах пиçĕхсе çирĕпленессине шанса тăни халĕ ĕнтĕ нихăçанхи пек те мар пысăк. (Алă çупаççĕ).

Анчах çапах та, Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери çыхăнăвĕсем пĕтĕмĕшлĕн, ăнăçлăн аталанса пыни пĕтĕм Союзăн ĕçĕсене кăна мар, çавăн пекех тата союзлă республикăсен тулашри ĕçсенчи нумай енлĕ тата ÿссе пыракан ыйтăвĕсене те пĕтĕмĕшпех тивĕçтерме пултарать тесе калама çук. Сăмахран, союзлă республикăсен хуçалăхпа культура тĕлĕшпе хăйсен уйрăм нушисем сахал мар, вĕсене пĕтĕм Союзăн чикĕ леш енчи представителĕсем, çавăн пекех тата Союз ытти государствăсемпе тăвакан договорсемпе килĕшÿсем пĕтĕмĕшпех çаврăнса илме пултараймаççĕ. Республикăсен çав нациллĕ ыйтăвĕсене республикăсем хăйсем тивĕçлĕ государствăсемпе тÿрремĕнех çыхăну тытнипе лайăхрах тивĕçтерме пулать. Паллах, çав йышши ыйтусене пĕтĕм Союзри тата республикăсенчи органсенче ятарласа тăтăклăн сÿтсе явни кирлĕ пулать. Республикăсен çав тулашри ĕçне йĕркелесе яма хăшпĕр вăхăт та кирлĕ пулни çинчен манма юрамасть. Ун пек ыйтусене шаблонпа мар татса параççĕ. Çапах та пĕр сăмахсăрах çакна каламалла: тулашри ĕçсем тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнасси чылай республикăсемшĕн ĕнтĕ пурнăç ыйтăвĕ пулса тăнă. Юлашкинчен, çакна та йышăнмалла: çак ĕç вăл пĕр-пĕр уйрăм союзлă республикăн интересĕсемшĕн кăна мар, ССР Союзĕн пĕтĕм тĕнчери çыхăнăвĕсене сарас тата пирĕн çĕршыв ытти государствăсемпе çыхăнса ĕçлессине çирĕплетес пĕтĕм ĕçĕн интересĕсемшĕн те кирлĕ. Çакă вăл вăрçă вăхăтĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать тата вăрçă хыççăнхи тапхăрта та хăйĕн çимĕçĕсене парĕ.

Наркоминдела пĕтĕм союзлă Наркоматран союзлă республикăсен Наркомачĕ туса хума кирлине асăннă сăлтавсене пула йышăнмалла ĕнтĕ. Пĕрремĕш тапхăрта республикăсен Наркоминделĕсем кăна пулнă пулсан, иккĕмĕш тапхăрта вара пĕтĕм Союзлă Наркоминдел кăна пулнă пулсан, халĕ вара Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн пысăкрах та анлăрах сарăлнă организаци—союзлă республикăсен Наркомачĕ пулса тăмалла.

Манăн кунта хамăрăн дипломатиллĕ практика пирки кăштах хушса каласа хăварасси юлать. Çакна палăртма лекет: Совет Конституцийĕнче союзлă республикăсен ытти государствăсене представительсем ямалли тата тулашри çыхăнусем тытмалли прависем тĕлĕшпе ятарласа кăтартса панисем çуккине хăшпĕр чухне совет республикисен тата пĕтĕм Совет Союзĕн интересĕсене тÿрремĕнех сиен кÿмелле ăнлантарса параççĕ. Кунта сĕнекен улшăнусем çавăн пек фактсене пĕтерме май параççĕ.

III. Нациллĕ ыйтăва татса парас тĕлĕшпе малалла çĕнĕ утăм туни

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне тата Оборона Халăх Комиссариатне урăхлатса йĕркелеме сĕнни Совет Союзĕнче нациллĕ ыйтăва татса парас ĕçре малалла çĕнĕ утăм туни пулса тăрать. Çакăн пек урăхлатса йĕркелени вăл пирĕн ленинла-сталинла наци политикин принципĕсемпе тÿрремĕнех килĕшсе тăрать. Хальхи вăхăтра çавăн пек мероприяти туса ирттерни çакна пĕлтерет: Совет государстви хăйĕн аталанăвĕнче çĕнĕ пусăма çĕкленчĕ, вăл туллин пурнăçпа пурăнакан пысăк организм пулса тăчĕ. Çакăнта Совет Союзне социализм принципĕсемпе туса йĕркеленин аслă пĕлтерĕшне тепĕр хут кăтартса панине куратпăр.

1936 çулта, ССР Конституцине çирĕплетнĕ Советсен съездĕнче тунă докладра Сталин юлташ Совет влаçĕн нациллĕ политики, нумай нациллĕ государствăна социализм никĕсĕ çинче ăнăçлăн туса йĕркелеме май панă нациллĕ политики çĕнтернине çапла сăнласа пачĕ:

«Нацисем хушшинчи çапăçусен тĕп организаторĕсем пулса тăракан эксплоататорла классем çукки; пĕрне-пĕри шанманнине саракан тата националистла харсăрлăха чĕртсе яракан эксплоатаци çукки; кирек мĕнле пусмăрлăха та хирĕç тăракан тата интернационализм идейисене тĕрĕс пырса пыракан рабочи класс влаçра тăни; хуçалăхпа обществăлла пурнăçăн пур тĕлĕсенче те халăхсене пĕрне-пĕри пулăшас ĕçе чăннипех пурнăçа кĕртсе пыни; юлашкинчен, ССР Союзĕнчи халăхсен нациллĕ культури, формипе нациллĕ, ăшчикĕпе социализмлă культури чечекленсе ÿсни,—çаксем пурте тата ытти çавнашкал факторсем ССР Союзĕнчи халăхсен сăн-сăпатне тĕпренех улшăнтарса ячĕç, вĕсем хушшинче пĕрне-пĕри шанми туйăм пĕтрĕ, вĕсем хушшинче пĕр-пĕринпе килĕшсе туслашса пурăнас туйăм вăйланса кайрĕ,—çапла вара пĕрлĕхлĕ союзлă государство системинче халăхсем пĕр-пĕринпе чăн-чăнах тăванла килĕштерсе ĕçлесе пурăнасси йĕркеленсе çитрĕ.

Çавна пула пирĕн халĕ пĕтĕмпех пулса çитнĕ тата пур йывăрлăхсене те тÿссе ирттернĕ нумай нациллĕ социализмлă государство пур, унăн çирĕплĕхне çутçанталăкăн кирек хăш пайĕнчи нациллĕ государство та ăмсанма пултарĕччĕ». (Нумайччен алă çупаççĕ).

Унтанпа çичĕ çул иртрĕ, — анчах мĕнле çулсем! Германи фашизмне тата унăн союзникĕсене хирĕç эпир Отечественнăй аслă вăрçă туса пыма пуçланăранпа кĕçех виçĕ çул çитет. Германи фашизмĕпе унăн союзникĕсем Совет Союзне хирĕç кĕрешес ĕçре пĕтĕм Европăн мĕнпур материалĕсен тата çыннисен ресурсĕсемпе усă кураççĕ. Çакă вăл пирĕн нумай нациллĕ государствăшăн çĕнĕ те чи пысăк тĕрĕслÿ пулчĕ. Совет Союзĕ çак тĕрĕслĕве те чыслăн тÿссе ирттерчĕ.

Октябрьти Социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă кун Сталин юлташ хăйĕн çак сăмахĕсемпе юлашки тапхăрăн итогĕсене турĕ:

«Совет Союзĕнчи пур халăхсем те хамăрăн Тăван çĕршыва хÿтĕлеме пĕр шухăшлăн-кăмăллăн пулса çĕкленчĕç, вĕсем хальхи Отечественнăй вăрçă, кам мĕнле наци пулнине тата мĕнле тĕн тытнине пăхмасăрах, пĕтĕм ĕççыннисен пĕрлĕхлĕ ĕçĕ пулса тăрать тесе, тĕрĕс шутлаççĕ. Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинче хирĕçÿсем пуçланса каясси не ĕмĕтленни мĕн тери ухмахла шанчăксăр пулнине гитлерла политиксем халĕ ĕнтĕ хăйсем те кураççĕ. Пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ вăрçăри пур йывăрлăхсемпе испытанисене те тÿссе ирттерчĕ, мĕнпур совет çыннисен фашистла захватчиксене хирĕç пыракан пĕрлехи кĕрешĕвĕнче татах та ытларах пиçĕхсе çирĕпленчĕ». (Алă çупаççĕ).

Çакăнта ĕнтĕ,—Сталин юлташ каланă тăрăх,—Совет Союз вăйĕн çăлкуçĕ.

Итогсем тăвапăр.

Хальхи условисенче государство ĕçĕнче çакнашкал пысăк улшăнусем туса эпир, паллах, çакăн пек ыйту лартма тивĕçлĕ: çакăн çине Хĕрлĕ Çарта тата унăн аслă тылĕнче — çĕршывра мĕнле пăхĕç? Урăхла каласан, эпир ССР Союзне тĕреклетес тĕлĕшпе-и е унăн вăйне чакарас тĕлĕшпе утăм тăватпăр?

Çÿлте каланисем çак ыйтусене татăклă ответ пама май параççĕ.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне тата Оборона Халăх Комиссариатне урăхлатса йĕркелесси союзлă республикăсен çĕршыври тата çĕршыв тулашĕнчи задачисемпе функцийĕсене аслăлатас тĕллевпе тухса тăрать. Вăл пирĕн Союза тĕреклетес ыйтусене хирĕçлемест çеç мар, пачах урăхла, çакна ăна пирĕн аслă государствăна малалла тĕреклетсе пырас шутпа тăваççĕ. (Нумайччен алă çупаççĕ). Совет Союзĕн Конституцине тунă вăхăтранпа союзлă республикăсене Совет Союзĕнчен тухма ирĕк панă. Анчах Совет Союзĕнчи халăхсем мĕн чухлĕ ытларах пурăнаççĕ, çавăн чухлĕ вĕсем пĕр-пĕринпе тусларах пурăнма, пĕр-пĕрне ытларах пулăшса тăма тата Совет влаçĕ ертсе пынипе мĕнпур йывăрлăхсене пĕрле çĕнтерсе пыма тăрăшаççĕ. (Алă çупаççĕ).

Республикăсен государство строительствинчи, çак шутра тулашри çыхăнăвĕсенчи нушисем ÿснине Совет Союзĕ йышăнни тата республикăсен çав нушисене законсем кăларса тивĕçтерни — пирĕн çĕршыври халăхсем пĕр-пĕринпе тăванла çыхăнса тăнине çирĕплетет, Совет Союзĕ пурăнни историре мĕн тери паха пулса тăнине Хĕвелтухăçĕпе Хĕвеланăçĕнчи халăхсен куçĕ умĕнче тата лайăхрах уçса парать.

Малалла тата çакна йышăнмалла: Совет Союзĕнче наци ыйтăвне татса парас тĕлĕшпе малалла тепĕр утăм туни—пĕтĕм прогрессивнăй этемлĕх енчен пăхсан, питĕ паха ĕç пулса тăрать. Империализмăн чи начар результачĕ пулса тăракан Германи фашизмĕ пуçне çĕкленĕ тапхăрта, хăйĕн кÿршисене пăвасшăн пулса, ирĕклĕ государствăсене пĕтерсе лартасшăн пулса, хăйĕн вăрă-хурахла империалистла политикине Европăри ытти халăхсене, унтан вара пĕтĕм тĕнчери халăхсене те йышăнтарасшăн пулса, пĕтĕм тĕнчери вăрçа сарса янă тапхăрта — Совет государствинче ленинла-сталинла наци политикине пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнÿ туни пĕтĕм тĕнчешĕн уйрăмах паха пулса тăрать. Совет влаçĕн çак утăмĕ—фашизма тата унăн этемлĕхе курайман политикине, халăхсем наци тĕлĕшĕнчен ирĕклĕн аталанса пырассине çав тери хирĕç пыракан политикине моральпе политика енчен çĕнĕрен пырса çапни пулса тăрать. Çак вăрçа пуçласа янă фашизма Совет Союзĕпе унăн союзникĕсем ăнăçлăн пыра-пыра çапаççĕ те ĕнтĕ, ăна çар енчен тĕппипех шăлса ыватас вăхăта çывхартса пыраççĕ. Анчах та эпир пĕлетпĕр: фашистла вăйсене çар енчен аркатса тăкнипе çеç чарăнса тăма юрамасть. Фашизма моральпе политика енчен те аркатса тăкассине вĕçне çитермелле. (Нумайччен алă çупаççĕ). Совет Союзĕнче государство тĕлĕшпе тума палăртнă улшăнусем, хальхи çирĕплетме сирĕн умна тăратнăскерсем, çав ĕçе ăнăçлăн пулăшса тăрĕç.

Государствăра улшăнусем тума сĕннине пурнăçа кĕртес ĕçре совет çыннисем пурте пĕр шухăшлă пулнине Верховный Совет кăтартса парĕ тесе шанса тăратăп эпĕ. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ).

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен тĕп ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче французсен чаçĕсем тăшманăн вăйла тунă темиçе контратакине сирсе янă та малалла куçса пынă. Акалчансен чаçĕсем темиçе питĕ паха çÿллĕ вырăна тытса илнĕ. Фронтăн икĕ секторĕнче тыткăна чылай илнĕ. Анцио патĕнчи кĕпер умĕнчи укреплени районĕнче союзниксен çарĕсем хăшпĕр тĕлте Итали территорине шалалла кĕрсе кайнă. Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче нумай вырăнсенче патрульсем тытăçа-тытăçа илнĕ.

Январĕн 29-мĕшĕнче союзниксен йывăр тата вăтам бомбардировщикĕсем пуринчен ытла Италири чугун çулсене тапăннă.

Январĕн 29-мĕшĕнче союзниксен Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен самолечĕсем 2.300 хут ытла вĕçсе тухнă.

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС) Официально пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче йывăр çапăçусем пынă. Ĕнер союзниксем Рапидо шывĕ патĕнче, кĕпер умĕнчи укреплениесем хыçĕнче темиçе çÿллĕ вырăн тытса илнĕ. Чылай секторсенче пăртак малалла куçнă. Анцио патĕнче кĕпер умĕнчи укреплени союзниксем аслăлатнăçемĕн аслăлатса пыраççĕ. Çĕнĕ çарсем тата хĕç-пăшал пырсах тăраççĕ.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Çурçĕр-Хĕвелтухăç Италири аэродромсене тапăннă. Ангарсене, мастерскойсене тата çĕр çинче ларнă самолетсене бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивни паллă пулнă.

Авиаци ытти соединенийĕсем тăшманăн Далмаци çыранĕсем патĕнчи карапĕсене атакăланă.

Кун каçа сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 63 самолетне персе ÿкернĕ. Тăшманăн машинисене çĕр çинче унтан та ытларах пĕтернĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

Берлинпа Брауншвейг хулисене тапăнни

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 31-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн пысăк вăйĕсем каллех Берлин çине бомбăсем пăрахнă.

Ытти самолетсем Вăтам тата Хĕвеланăç Германири объектсене атакăланă, тăшман шывĕсене минăсем пăрахса тухнă. Çак асăннă операцисенчен 33 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Ĕнер кăнтăрла американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Брауншвейг хулинчи авиаци заводĕсене атакăланă. Америка бомбардировщикĕсене Канадăпа союзниксен сывлăш-çар вăйĕсен самолечĕсем пулăшса пынă.

Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 91 самолетне персе ÿкернĕ.

Юлашки кунсенче союзниксен авиацийĕ çаплах тăшманăн Голландири тата Çурçĕр Францири çар объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

Январĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен самолечĕсем Хĕвелтухăç Англин хăшпĕр районĕсем çине, вăл шутра Лондон районĕ çине, вĕçсе çитнĕ. Чылай пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем сиен тунă. Вилнисемпе аманнисем пур.

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: американецсен «Либерейтор» йышши йывăр бомбардировщикĕсем, «Сандерболт» йышши истребительсем хÿтĕлесе пынипе, январĕн 31-мĕшĕнче кăнтăрла Па-де-Кале районĕнчи çар объекчĕсене атакăланă. Тăшман истребителĕсем хирĕç тăрса çапăçни пулман.

Январĕн 29-мĕшĕпе 30-мĕшĕнче американецсен йывăр бомбардировщикĕсем Германири çар объекчĕсем çине 3.900 тонна ытла бомба пăрахнă. Январĕн 30-мĕшĕнче пулса иртнĕ операцисене пĕтĕмпе 1.700 самолет хутшăннă. Январĕн 29-мĕшĕпе 30-мĕшĕнче американецсен 54 бомбардировщик тата 21 истребитель пĕтнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 225 самолетне персе ÿкернĕ.

Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: январĕн 31-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлина тапăнни юлашки тăватă кун хушшинче Германи столицине виççĕмĕш хут атакăлани пулса тăрать. Юлашки виçĕ тапăнура Берлин çине 5.000 тонна ытла бомба пăрахнă.

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ГЕРМАНИ ФРОНТĔНЧЕ НИМĔÇСЕН ШУЛЬЦ ГЕНЕРАЛНЕ ВĔЛЕРНĔ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра официально çапла пĕлтернĕ: Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕçсен бронетанковăй дивизийĕн командирне Шульц генерал-майора вĕлернĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00025 Типография №1, Управления полиграфпромышленность при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.